Пёчёк бизнес страници

Пурнăçа кёртмелли сахал мар

Юлашки вăхăтра пёчёк хуçалăх формисен пёлтерёшё район экономикинче çулсеренех ўссе пырать. Пёчёк предпринимательство субъекчёсем те нумайлансах пыраççё. Вёсенче ёçлекенсен йышё те хушăнса пырать, çав предприятисен район экономикинчи тўпи те çулранçул пысăкланать. Асăннă предприятисем туса кăларакан, паракан пулăшусен калăпăшё çеç мар, пахалăхё те ўснёçемён ўсет.

Мёнле пурăнаççё районти пёчёк тата вăтам предприятисем? Мёнпе пулăша пырать вёсене район администрацийё? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та ёнтё эпё район администрацийён экономика пайён ертўçинчен Э.И. СИМАКОВАРАН.

– Чи малтан çакна каласа хăварам. Районта 2007-2011 çулсенче пёчёк формăллă хуçалăхсене аталантармалли ятарлă программа йышăнса хăварнă. Çав 5 çул хушшинче вёсене 156 млн. тенкёлёх укçа-тенкёпе пулăшма палăртнă. Çав шутран 15,220 млн. тенки – район бюджетёнчен.

– Ятарласа илсе кăтартнă цифрăсенчен çакă курăнать: пёчёк тата вăтам предприятисенчен ытларахăшё сутуилўпе обществăлла апатлану системинче йёркеленнё. Малашне ку енёпе мёнлерех задачăсене палăртнă?

– Тёллевсем пёчёкех мар. Тёслёхрен, 2020 çул тёлне халăха тёрлёрен пулăшу парассинче пёчёк бизнесăн тўпине 2 хут, социаллă пулăшу паракан пёчёк предпринимательствăна 5 хут, çёнёллё ёçлекен пёчёк бизнеса 5 хут, пурăнмалли çурт-йёрпе коммуналлă хуçалăх енёпе ёçлекеннисене 3-4 хут ўстерме шутлатпăр.

– Пытарма кирлё мар, паян çак пёчёк формăллă предприятисенче ёç укçи пысăках мар предприятисем те çук мар. Вёсempe мёнле ёçлесе пыратăр?

– Çакна палăртмалла, ёç укçине уççăн кăтартассине ведомствăсем хушшинчи оперативлă комисси туса пырать. Кăçалхи 9 уйăхра асăннă комисси 5 лару ирттернё. Унта ёç укçине пурăнмалли чи пёчёк минимумран сахалтарах тўленё 20 хуçалăха пăхса тухнă.

– Паян пёчёк тата вăтам предпринимательствăна патшалăх енчен пулăшмалли майсем çителёклех. Пирён районти миçе предприяти усă курнă халиччен çав пулăшусempe?

– Пёчёк тата вăтам предпринимательствăна аталанма пулăшмалли чи пёрремёш мел – кредит организацийёсенче илнё кредит ставкисене патшалăх саплаштарни. Паянхи куна пирён районти пёчёк бизнесăн 9 представителё çак çăмăллăхпа усă курчё: вёсем илнё кредит ставкине республика бюджетёнчен субсидилерёç.

2007 çулта район администрацийё, республика программине хутшăнса, инновациллё бизнес-инкубатор системине тума 480,0 пин тенкёлёх Грант выляса илчё.

– Бизнес-инкубатор çинчен тёплёнрех чарăнса тăрсан аванччё.

– Бизнес–инкубаторсене пёчёк тата вăтам предпринимательствăна пулăшас тёллевпе йёркелеççё. Уйрăмах предпринимательствăна суйласа илнисене ёçе йёркелесе янă чухнехи тапхăрта усăллă. Бизнес-инкубатор предпринимательсене тёрлёрен ыйтусempe консультаци парса пулăшать, бухгалтери, юридици ыйтăвёсempe тата ытти енёпе.

Каласа хăвармалла, районти Бизнес-инкубатор район администрацийён çуртёнчи пўлёме арендăлать. Унăн ертўçи – Е.Н. Субботин. Хальхи вăхăтра бизнес-инкубаторăн пўлёмне юсаса кирлё оборудовани вырнаçтарас ёç пырать.

– Эльвира Иосифовна, предпринимательсене патшалăх енчен пулăшу памалли условисем пур пулё-ха? Мёне тёпе хуратăр ку ёçре?

– Патшалăх енчен пулăшава пёчёк тата вăтам предприятисен комисси витёр тухнă бизнес-планне кура параççё. Проекта суйласа илнё чухне вара коммерци эффекчё мёнлереххине, хăйсен е бюджетри мар хушма укçа-тенкёпе усă курнине, потребительсен рынокёнче çак предприяти конкурентлăх туса хунине, предприятин социаллă пёлтерёшне, çёнё ёç вырăнёсем туса хунине тёпе хураççё. Пурăнмалли çурт-йёрпе социаллă сфера, сывлăх сыхлавё, вёрентў, инновации проекчё енёпе тимлекен предприятисене уйрăмах пулăшма тăрăшаççё.

– Тата мёнле пулăшусempe усă кураççё районти предпринимательсем?

– Продукципе тивёçтерес тата пулăшусем парас енёпе муниципаллă заказсене пурнăçлани те пулăшăвăн пёр пайё пулса тăрать. Çак Программăпа килёшўллён пёчёк предприятисенчен 15 процентёнчен кая мар муниципаллă ыйтусempe продукци кăларма тата пулăшусем пама заказсем илессине хутшăнать. Кăçалхи 9 уйăхра районти пёчёк бизнес представителёсенчен муниципаллă ыйтусempe 28,5 млн. тенкёлёх таварсем туяннă, пулăшусем панă е ёçсем пурнăçланă. Ку вăл пётёмпе туяннă продукцисен, панă пулăшусempe пурнăçланă ёçсен 31 процентчё чухлё пулать.

Районта çаван пекех пёчёк формăллă хуçалăхсене аталантарма тата пулăшма координаци канашне йёркеленё. 9 уйăхра унăн 3 ларăвне ирттернё. Унсăр пуçне бизнес технологийён шкулёпе тата ытти контроллекен органсempe семинар-канашлусем, Пёчёк предпринимательство кунне ирттересси йăлана кёнё. Район администрацийён сайчё çинче «Пёчёк бизнес» банер пур. Тёрлёрен çёнёлёхсempe район хаçачё урлă та паллаштарсах тăратпăр.

– Районти предпринимательсем хăйсен ёçёпе кăна çыхланса ларман-и? Конкурссене хутшăнаççё-и?

– Районта, республикăра иртекен тёрлёрен конкурссене пёчёк бизнес представителёсем хастар хутшăнаççё. Тёслёхрен, «Мăн кун тёлёнтермёшё – 2008» конкурсра «Сундырь-Хлеб» чикёллё яваплăхлă общество (ертўçи – Л.Г. Ильгечкин) «Чи лайăх Мăн кун куличё» номинацире çёнтерчё. Çулсеренех районти 5-7 предприниматель «Çулталăкри чи лайăх предприниматель» республикăри конкурса хутшăнать. Шупашкарта иртнё регионсем хушшинчи алăпа тунă теттесен конкурсёнче М.Н. Пушкарева çулсеренех çёнтерўçё пулать. Чăваш Республикин Суту-илўпе экономика аталанăвён министерстви пулăшнипе йывăç касса ерешсем тăвакан П. Мазуркин çинчен ятарласа «Халăх ал ёç промыслин опытёнчен» кёнеке кăларнă. Вăл çулсеренех халăх художество промыслисен куравёнче 1 вырăн йышăнать. Асăннă министерство ирттернё «2007-2008 çулсенчи чи лайăх шкул столовăйё» конкурсра Муркашри пётёмёшле пёлў паракан вăтам шкул 1 вырăн йышăнчё.

Районти предпринимательсем çавăн пекех района иртекен пур ыр кăмăллăх мероприятийёсене те хутшăнаççё.

–Эппин, паян районта пёчёк бизнес йёркеллё аталанать теме пулать?

– Çитёнўсempe пёрле татса паман ыйтусем те çук мар. Квалификациллё кадрсем çителёксёр пулни, паянхи кун ыйтакан оборудованисempe пўлёмсем çитменни йывăрлăх кăларса тăратать. Ёçе илнё çынсен социаллă тата ёç правсемшён паян бизнес явапла пулса тăрать тесе çирёплетсе калама çук. Çул хёрринчи сервис объекчёсем те паянхи кун ыйтăвёсене тивёçтереççё теме çук. Çаван пекех халăх канăвне йёркелес ёçе, туризмпа физкультурăна, сывлăха çирёплетмелли мероприятисене пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсене активлăрах явăçтармалла. Çак çитменлёхсене вырăнти хăй тытăмлăх органёсempe пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсем пёр тёллевпе ёçлесе татса памалла. Бизнеса çынсем тăваççё тата ăна çынсем валли йёркелеççё – çакă тёп вырăнта пулмалла та. Районти предпринимательсен пёрлешёвне е канашне йёркелени çак ыйтусене татса памалли мелсенчен пёри пулнă пулёччё.

– Тавах, Эльвира Иосифовна, калаçушăн.

Республикăри çăкăр ăсти – пирён районтан

Районти пёчёк тата вăтам предприятисем района, республикăра пулса иртекен тёрлёрен конкурссене хаваспах хутшăнаççё. Октябрён 3-мёшёнче Чăвашпотребсоюз канашёпе потребкооперацинче тата предпринимательствăра ёçлекенсен профсоюз рескомён президиумён йышăнăвёпе килёшўллён республикăри «Чăваш Енти потребительсен кооперацийён чи пултаруллă çăкăр пёçерекенё» конкурса пётёмлетрёç. Асăннă мероприяти пирён районти «Сундырь-Хлеб» чикёллё яваплăхлă обществăра пулса иртрё.

Палăртмалла, пирён районти «Сундырь-Хлеб» тата «Моргауши–Хлеб» чикёллё яваплăхлă обществăсенчи çăкăр пёçерекенсемсёр пуçне унта Ишлейри, Пăрачкаври, Вăрмарти, Йёпреçри, Çёрпўри, Вăрнарти, Сёнтёрвăрринчи, Красноармейскинчи, Хёрлё Чутайёнчи, Канашпа Патăрьелёнчи çăкăр ăстисем хутшăнчёç. Пётёмпе вун виççён.

Çăкăр пёçерекенсен пултарулăхне сумлă жюри хак пачё. Конкурса хутшăнакансем киле панă ёçе те, производствăпа çыхăннă заданисене те лайăх пурнăçларёç, теори ыйтăвёсем çине те тăрăшса хуравларёç. Анчах та çёнтерўçё пёрре пулмалла. «Чăваш Енти потребительсен кооперацийён чи пултаруллă çăкăр пёçерекенё» ята Мăн Сёнтёрти «Сундырь-Хлеб» чикёллё яваплăхлă обществăри С.А. Елумова çёнсе илчё. Сёнтёрвăрринчи çăкăр заводёнчи В.В. Никифоровапа Çёрпў райповён Л.И. Колосова çăкăр пёçерекенёсем 2 тата 3 вырăн хуçисем пулса тăчёç.

Ултă конкурсант тёрлё номинаци çёнтерўçи пулчё. Çав шутран «Моргауши-Хлеб» чикёллё яваплăхлă обществăри Л.В. Звонкова «Хăйне евёрлёхпе пултарулăхшăн» номинацире çёнтерчё. Тепёр 4 çăкăр пёçерекене асăннă конкурса хутшăнăшăн свидетельствăсем пачёç.

МИÇЕ ВЁСЕМ?

Паянхи куна пирён районта пёчёк тата вăтам предприятисем пурё 101, уйрăм предпринимательсем 610-ăн, 67 хресчен (фермер) хуçалăхё, 19 ял хуçалăх потребительсен кооперативне регистрациленё, ял тăрăхёсенчи килти хушма хуçалăхсем пётёмпе 13303.

Пёчёк тата вăтам предприятисенче районёпе пурё 2200 çын ёçлет. Урăхла каласан, район экономикинче вăй хуракансен 18 процентчё чухлё.

ПЁЧЁК ТАТА ВĂТАМ ПРЕДПРИЯТИСЕМ МЁН ЁÇЛЕÇÇЁ?

Отраслсempe илес пулсан, пёчёк тата вăтам предприятисен йышёнчен 41 процентчё - суту-илў тата обществăлла апатлану енёпе тимлет, 27 процентчё – промышленноçра, 20 процентчё – ял хуçалăхёнче, 15 процентчё – строительствăра.

РАЙОН ЭКОНОМИКИНЧЕ МЁНЛЕ ВЫРĂН ЙЫШĂНАÇÇЁ ВЁСЕМ?

Кăçалхи 9 уйăхра пёчёк формăллă хуçалăхсен субъекчёсем пётёмпе 70,5 млн. тенкёлёх продукци кăларса реализациленё. Е районта туса кăларса сутнă продукцин 23 процентчё чухлё.

Пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсем 9,5 млн. тенкё чухлё налук тўленё. Пуçтарăннă пётём налукран пёчёк хуçалăх формисен субъекчёсен тўпи 21 процент чухлё.

ПЁЛМЕ ИНТЕРЕСЛЁ

Пёчёк тата вăтам предприятисенчи вăтам ёç укçи 4500-5000 тенкёпе танлашать.

Предпринимательствăра инвестици активлăхё пёчёк мар. Кăçалхи 9 уйăхра хăйсен укçи-тенкипе 10 суту-илў точкине уçнă. Çапла майпа тепёр 28 хушма ёç вырăнё тупăннă.

Пёчёк предприятисен малашё пёчёк мар

Патшалăх предпринимательсене те пулăшать

«Предприниматель» ăнлав пирён пурнăçа пысăк хăвартлăхпа килсе кёчё. Пёчёккён хăнăхса пытăмăр унăн витёмне. «Тавара пёр хакпа туянса виçё хут хаклăрах сутакан» – акă мёне пёлтернё ытларахăшёшён çак сăмах малтанхи тапхăрта. Вёсене патшалăх пулăшăвё кирлё текен шухăш асра та пулман.

Паян вара пирёнтен кашниех лайăх пёлет: кирек епле ёçе те пуçлама çăмăл мар. Çав шутран предпринимательствăра та. Никам та никама та хутаçпа укçа пăрахса памасть. Ёçлемесёр, нушаланмасăр килмест укçа енчёке.

Тепёр енчен, пёчёк тата пысăк предпринимательство аталанса пыни потребительсемшён те лайăх: камран мёнле тавар суйламалăх пулать, вăл е ку пулăшăва та ёçе пахалăхлă туса паракансенчен ыйтатпăр. Çитменнине йёркеллё аталанса пыракан предприятире ёç вырăнёсем те йышланаççё.

Иртнё эрнере «Заря» чикёллё яваплăхлă обществăра иртнё Пёчёк предпринимательство кунёнче пуçтарăннисем шăпах пурнăçа çак сферăпа çыхăнтарнисене пырса тивекен ыйтусене пăхса тухрёç те. Район администрацийён экономика пайён пуçлăхё Э.И. Симакова пёлтернё тăрăх, районта пёчёк тата вăтам предпринимательство япăх мар аталанса пырать. Ăна çак тёслёх те çирёплетсе парать. Кăçалхи 9 уйăхра вёсем тунă кăтарту малтанхи çак тапхăртинчен 23 процент чухлё ытларах.

Анчах та ўсём çулё çине тăриччен патшалăх пулăшăвё те вырăнлах предпринимательсемшён. Ку енёпе район администрацийё май килнё таран веçех тăвать, тёрлё программăсене хутшăнать. Ку енёпе Муркашсем правур пулнине Чăваш Республикин экономика аталанăвён тата суту-илў министрён çумё А.А. Быченков та палăртсах каларё.

Предпринимательсене патшалăх енчен пулăшу памалли мелсем вара çителёклех. Александр Анатольевич чи малтанах **процент ставкисене субсидилемелли мел** çинче чарăнса тăчё. Производство йёркеллё аталанса пырать пулсан, халăха пулăшу парасси кирлё пек пулса пырать пулсан, ку пулăшăва илме чăрмавлă пулмё.

Пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсене патшалăх енчен пулăшмалли тепёр мел – **Республикăри гарантиллё Фондăн поручительствипе усă курса кредит парасси.** Асăннă пулăшупа усă куракан предпринимательсем пирён района та пур.

Пурăнакан, тăрăшакан малаллах пăхать, малаллах туртăнать. Министр çумё çавна май предпринимательсене пулăшмалли виççёмёш ен çинче те тёплён чарăнчё: **ярмăркка-куравсempe ёçлесси.** Мёне пёлтерет-ха ку? Пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсен хăйсем туса кăларнă продукцие сутма республика, Раççей тулашне те тухма тăрăшмалла. Урăхла каласан, тёрлё ярмăркка-куравсене хутшăнса тумалла çак ёçе. Çитменнине, **тăкаксен иккё виççёмёш пайне патшалăх енчен саплаштараççё.** Унта хутшăнмалли сертификата туянма кăна 250 пин тенкё тухса каять пулсан, ку пёчёк пулăшу мар. Ўркенмелле мар çеç утăмсене сарлакарах пусма.

Укçа-тенкёпе çеç мар пулăшать патшалăх предпринимательсене. Çитес çултан пуçласа тата тепёр икё пулăшу мелё пурнăçа кёрет. Кулленхи ёçре предпринимательсен тем тёрлё ёç те тумалла. Документсене тёрёс çырмалла, малалла аталанма саккунсене те пёлмелле. Апла пулсан вăл е ку ыйтупа консультаци те ытлашши пулмасть. Консультаци памалли пулăшу кёçех пурнăçа кёмелли пёрремёш мел пулса тăрать те. Тепри – право тёлёшёнчен пулăшу парасси. Апла пулсан предпринимательствăпа ёçлекенсен малалла право тёлёшёнчи ыйтусempe пулăшу илме майсем ытларах пулёç.

Пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсене пурлăх тёлёшёнчен пулăшмалли мел те çук мар. Бизнес-инкубаторсем туса хуни шăпах çакăнта кёрет те. Пирён районта та йёркелерёç ăна.

Паянхи пурнăçран юлмалла мар предпринимательсен. Налук тёлёшёнчен те, пенси енёпе те саккунсем улшăнсах тăраççё. Пёчёк предпринимательство кунёнче çакăн çинчен те калаçрёç пуçтарăннисем.

Халăхшăн тăрăшсан, пуласлăх пысăкрах

Пирён районта йёркеллё ёçлесе пыракан пёчёк тата вăтам предпринимательство субъекчёсем сахалах мар. Апла пулсан пёрпёрин опычёпе паллашмасăр май та çук. Патшалăх пулăшăвёпе усă курса малаллах аталанса пыраççё вёсем те. «Сундырь – Хлеб» тата «Моргауши – Хлеб» чикёллё яваплăхлă обществăсем те юлашки çулсенче патшалăх пулăшăвёпе усă курса паянхи кун ыйтакан тёрлёрен оборудованисем туянчёç. Çапла майпа производствăна малалла аталантарма пултарчёç. Районта пурăнакансем вёсем кăларакан продукцие кăмăлласах туянаççё. Вёсен ассортименчё те пуян.

Пёчёк тата вăтам предпринимательствăра паян ытларахăшё – суту-илў предприятийёсем. Предпринимательсем хăйсем те паян суту-илўпе ытлах никама та тёлёнтерес çуккине лайăх ăнланаççё. Çитменнине кашни магазинтах - çав таварсем. Çавăнпа та «Заря» чикёллё яваплăхлă общество ертўçи П.Т. Терентьев каланă пек, халё халăха пулăшу парас енёпе ёçлеме меллёрех. Хăй те вăл юлашки вăхăтра çак енёпе тимлеме пуçларё.

– Манăн строительство ёçёсене пурнăçлакан 2 бригада пур тата 4 сварщик. –Заказчиксем тупăнсах тăраççё, – терё Петр Терентьевич. Хăй суйланă çулпа кăмăллă пулни курăнчё вăл каланинче.

Предприниматель çаван пекех пушă ларакан фермăсенче халăхран ял хуçалăх продукчёсене йышăнмалли вырăнсем туни вырăнлă пулассине те палăртрё. Пултаруллă та вăр-вар çынсем кăна кирлё çакна валли.

– Хам кăштах çамрăкрах пулнă пулсан ним мар пёр фермăна илнё пулăттăм, çак шухăша пурнăçа кёртнё пулăттăм, – терё вăл.

«Моргаушагропромснаб» МУП çёнё ертўçи Г.Г. Михайлов ку ыйтăва вара пурнăçлама пуçланă та. Геннадий Геннадьевич Пёчёк предпринимательство кунёнче каланă тăрăх, асăннă предприяти малалла шăпах халăхран çёр улми, кишёр тата ытти пахча çимёç туянса ăна пёчёкрех çыхăсенеултарса сутассипе тимлё. Пахча çимёçе тултармалли оборудование лизинг мелёпе илме хатёрленеççё паян кунта.

Ёçе пуçласан, вăл каять. Ўркенмелле мар çеç. Çакна районти предпринимательсенчен кашниех лайăх пёлет. Апла пулсан малалла районта халăх ыйтăвёсене тивёçтерессипе çёнё пёчёк предприятисем хушăнас шанчăк пур.

Кăларăма Л. ПАВЛОВА хатёрленё.